*  *  *

*Геннадий Никандрович Волкова*

Тĕрĕксен Турри — Шур Кашкăр,
Волков — Кашкăр йăхĕнчен.
Вăл малашлăха курасшăн
Ваттисен пехилĕнче.

Аслă Елчĕкре çуралнă
Çак талантлă хунн ачи,
Пурпăçа çавра çурлаллă
Курнă мар-и Хуначи.

Тăрăшнах чăваш хресченĕ,
Ăс ăсман вăл Пăларан:
Çанă тавăрса ĕçленĕ,
Тар юхтарнă ачаран.

Утнă ăслăлăх этемĕ
Хĕн пулсан та тăвалла...
Тайма пуçăм, академик,
Тав тăватăп тăванла!

Çамрăксем, юман пек кашлăр,
Вĕренсе ваттисенчен...
Тĕрĕксен Турри — Шур Кашкăр,
Волков — Кашкăр йăхĕнчен.